26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАЙ
8
ШАМАТКУН
96(6333) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Социализмлă ăмăртăва малалла вăйлатса пырар

Май праздникĕ умĕн пирĕн çĕршывра социализмлă ăмăрту хумĕ анлăн сарăлса пычĕ. Социализмлă ăмăрту пулăшнипе фабрикăсемпе заводсем пысăк ўсĕмсем турĕç, фронт валли тата ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерме тĕрлĕ продукци ытларах туса кăларса, пирĕн çĕршывăн вăй-хăватне ўстерчĕç.

Май умĕнхи социализмлă ăмăртăвăн результачĕсем пысăк. Анчах пирĕн вăл ўсĕмсемпе лăпланса лармалла мар. Май умĕнхи ăмăртура тунă ўсĕмсене çирĕплетсе, малалла вăйлатса пымалла. Социализмлă ăмăрту хумне татах та анлăнрах сарса ямалла.

Аслă çулпуç Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче кăларнă хайĕн приказĕнче пирĕн çĕршыв умне пысăк задачăсем лартрĕ. «Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă Хĕрлĕ Çара орудисем, танксем, самолетсем, пулеметсем, автоматсем, минометсем, боеприпассем, снаряжени, апат-çимĕç татах та ытларах парса тăма хушать. Апла пулсан, рабочисем, колхозниксем, пĕтĕм совет интеллигенцийĕ фронт валли икĕ хут нумайрах вăй хурса ĕçлени кирлĕ.

Пирĕн мĕнпур çынсемпе пĕтĕм учрежденисем тылра пĕр-пĕринпе килĕштерсе, лайăх сехет механизмĕ пек, тикĕс ĕçлени кирлĕ. Аслă Ленин хушса хăварнине аса илер-ха: **«Вăрçă пурпĕрех пуçланчĕ пулсан — йăлтах вăрçă валли, кирек те мĕнле сўрĕк ĕçленине тата вăя хурса ĕçлеменнине вăрçă вăхăтĕнчи закон тăрăх айăплаамалла».** Çакăн пек вĕрентет пире çулпуç, çакăн пек пирĕн умра тăракан задача.

Сталин юлташăн кăçалхи майăн 1-мĕшĕнче кăларнă приказĕ пирĕн çĕршывра социализмлă ăмăртăва çĕнĕ вăйпа чĕртсе ячĕ. Çĕршыври хура металлургипе тĕслĕ металлургин малта пыракан предприятийĕсем çав промышленноçсенчи мĕнпур рабочисене социализмлă ăмăртăва тата ытларах вăйлатма чĕнсе каларĕç. Кăнтăр Уралти никель тăвакан комбинатăн коллективĕ, социализмлă ăмăртăва малалла вăйлатса пыма çĕршыври мĕнпур рабочисене чĕнсе, хăй çине çакăн пек обязательствăсем илнĕ: иккĕмĕш квартал планне июнĕн 24-мĕшĕ тĕлне тултармалла; пĕррĕмĕш кварталпа танлаштарсан, 60 процент ытларах руда кăлармалла; иккĕмĕш кварталта 3.000 тоннăран кая мар кокс, 350 тонна мазут, 1 миллион киловатт-сехет электроэнерги перекетлесе хăвармалла; рударан металл уйăрса илессине икĕ хутран кая мар ўстермелле; пĕррĕмĕш кварталпа танлаштарсан, продукцин хăйне ларакан хакне 5 процент чакармалла; подсобнăй хуçалăхри çураки ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлемелле.

Хура металлургипе тĕслĕ металлурги работникĕсен примерĕпе çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем ăмăртăва вăйлатса пыраççĕ. Пирĕн республикăри предприятисен коллективĕсем те, Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ. Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен завод коллективĕ хăй çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕ. Кунти рабочисемпе мастерсем ĕç нормине 150—170-шер процент тултарса пыма пулаççĕ, хăйсен сăмахне малтанхи кунсенчен пуçласах ĕçе кĕртеççĕ.

Рабочисемпе пĕрле, колхозлă хресченсем те çураки ĕçĕсенче социализмлă ăмăрту ялавне çўле çĕклеççĕ, çĕршывпа фронт валли тырпул ытларах туса парассишĕн кĕрешеççĕ. Ăмăрту результачĕсем куç умĕнчех — чылай колхозсем ĕнтĕ çураки ĕçĕсене вĕçлерĕç. Ака ĕçĕсем уйрăмах Калинино, Вăрнар, Елчĕк районĕсенче ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Вăрнар районĕнчи 16 колхоз майăн 5-мĕшĕ тĕлнех çураки ĕçĕсене вĕçленĕ, халĕ вĕсем çĕрулми лартма тытăнаççĕ. Çак çитĕнўсене тума вĕсене социализмлă ăмăртăва колхозсем хушшинче анлăн сарса яни пулăшнă.

Анчах Сталин юлташăн приказне, тăван çĕршыв приказне ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, нимĕç захватчикĕсене хирĕç татăклă кĕрешĕве тухма тĕплĕн хатĕрленсе çитес тесен, промышленноçра та, ялхуçалăхĕнче те социализмлă ăмăртăва татах та анлăнрах сарса пымалла. Партипе совет тата комсомолпа профсоюз организацисен çав ăмăртăва пуçарса ертсе пымалла, кашни рабочипе работницăна, кашни колхозникпе колхозницăна ăмăртăва явăçтарассишĕн кĕрешмелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 6-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Майăн 6-мĕшĕнче Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, Неберджаевскаяпа Старый Абагума каялла тавăрас шутпа нимĕçсем пĕринчен пĕри хаяртарах 5 контратака тунă. Пирĕн войскăсем тăшмана пысăк çухатусем кўрсе, унăн контратакисене пурне те сире-сире пăрахнă. Нимĕç войскисене хĕвеланăçнелле хăваласа янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшман транспортне тата тральщикне путарнă.

* * *

Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, çапăçусем пынă. Оборонăллă нумай сооружонисемпе усă курса, нимĕçсем совет войскисем малалла куçнине чарас шутпа темиçе хут контратака тунă. Çапăçусем темиçе хут та штык вĕççĕн çапăçассине куçнă. Пĕр соединенин чаçĕсем тăшман вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пырса малалла куçнă та темиçе паха высотана йышăнса илнĕ. Пĕр участокра кăна нимĕçсен 1.500 салтакпа офицера çити пĕтнĕ. Нимĕçсен 6 танкне пĕтерсе тăкнă, 15 оруди, 32 пулемет, 43 миномет тата боеприпассемпе çар хатĕрĕсен 6 складне тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи войскăсене хастарлăн пулăшса пынă. Бомбăсем пăрахса совет летчикĕсем нимĕçсен темиçе танкне, 25 орудине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтернĕ тата тăшманăн нумай салтакне вĕлернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Артиллери тăшманăн 4 блиндажне, 2 наблюдательнăй пунктне, йывăр орудине тата боеприпассем тиенĕ темиçе лавне аркатса тăкнă.

* * *

Севск районенче ташман çапăçса разведка тума хăтланнă. Кĕске çапăçу хыççăн нимĕçсене сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсен 100 çити вилли выртса юлнă. Кўршĕри участокра пирĕн разведка тăвакан группа тăшман окопĕсене кĕрсе кайса, 20 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Балаклейăран кантăртаракра пирĕн артиллеристсем тăшманăн 2 артиллери батарейине тата 2 миномет батарейине пусарнă. Противотанковăй пăшалпа персе, красноармеец Пырсин юлташ нимĕçсен „Юнкерс—88“ йышши самолетне персе ўкернĕ. Самолет тăшман оборонин малти хĕррине анса ларнă хыççăн ăна пирĕн артиллери персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре тăшмана хирĕç персе тănă. Пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 3 дзотне аркатнă, артиллерин 5 батарейине пусарнă тата тăшманăн автоколоннине сапаласа янă. Лось, Костоглотов тата Сучков снайперсем икĕ кун хушшинче 18 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украина районĕсенчен пĕринче кĕрешекен Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă ятпа хисепленекен партизансен отрячĕ нимĕç автоколоннине тапăннă. Партизан Тарас, вут хыптаракан шĕвек тултарнă кĕленчепе персе, бронемашинăсене чĕртсе янă. Ытти партизансем 6 грузовой автомашинăна тата 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Щорс ячĕпе хисепленекен партизансен отрячĕ боеприпассем тиенĕ нимĕç эшелонне сирпĕнтернĕ. Паровоз тата 10 вагон сывлăшалла сирпĕннĕ. Чугунçулăн çав участокĕнче вара икĕ талăк хушши поездсем çўремен.

* * *

Крымская районĕнче Хĕрлĕ Çар енне нимĕçсен 97-мĕш горнострелковăй дивизин салтакĕ Георг К. куçнă. Вăл çапла каласа панă: „Офицерсем пире час-часах темле çухатусем пулсан та хамăр позицисене тытса тăмалли çинчен калатчĕç. Анчах та вырăссем тупăсемпе минометсенчен çав тери вăйлăн пеме пуçларĕç. Темиçе сехет хушши пуçа çĕклеме те май пулмарĕ. Аркатса тăкнă блиндажсемпе дзотсем патĕнче, окопсемпе траншейăсенче нимĕçсемпе румынсен нумай вилли йăваланса выртатчĕç. Каялла чакакан нимĕçсемпе румынсен чаçĕсем аманнисене çавăнтах пăрахса хăваратчĕç. Крымская районĕнче вилнĕ нимĕçсене пит нумай пытарнă. Станицăри паркра салтак масарĕ туса хунă. Вăл масар çинче 1000 ытла вилĕ выртнине эпĕ лайăх пĕлсе тăратăп“.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Минск облаçĕнчи Черневичи ялне пĕтерсе çĕрпе танлаштарнă. Вĕсем колхозниксен çурчĕсене пĕтĕмпех çунтарнă. Ялта пурăнакан çынсенчен нумайĕшĕ вăхăтра вăрмана тарса пытаннă. Яла юлнă старик сенчен, хĕрарăмсемпе ачасенчен нимĕç палачĕсем çав тери тискеррĕн мăшкăлланă.

Майăн 7-мĕшĕнчи ирхи пелтерў

Майăн 7-мĕшĕ ирăн тенĕ чух çĕрле Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç çапăçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, совет артиллерисчĕсем пехотăна пулăшса пырса нимĕçсен 2 танкне пĕтерсе тăкă, артиллерин 20 батарейине тата тăшманăн пирĕн çине персе тăракан 30 ытла точкине пусарнă, тăшманăн нумай дзочĕсемпе блиндажĕсене аркатса тăкнă. Тăшман çынсем тĕлĕшпе пысăк çухатусем тўсет. Совет подразделенийĕ йышăнса илнĕ халăх пурăнакан пĕр пунктра 350 ытла тăшман вилли выртнине шута илнĕ. Халăх пурăнакан тепĕр пунктра нимĕçсем аманнă салтаксемпе офицерсене 200 çынна ытла пăрахса хăварнă. Летчик-майор Семенихин юлташ сывлăшри çапăçура нимĕçсен «Мессершмитт-109» йышши 2 истребительне персе ўкернĕ. Старши лейтенант Дрызин юлташ «Юнкерс-88» йышши 2 самолета персе ўкернĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче старши лейтенант Полевой юлташ командир пулса ертсе пыракан разведчиксен группи тăшман хушшине кĕрсе кайса блиндажра пулнă 10 гитлеровеца вĕлернĕ. Пирĕн боецсем темиçе çынна тыткăна илсе хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Льговран хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллеристсем тăшман боеприпассем хунă склада пĕтерсе тăкнă, 3 блиндажа тата 2 дзота аркатса тăкнă, минометсен 3 батарейине пусарнă тата каçă патĕнче нимĕç салтакĕсем ларнă 4 лодкăна путарнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пĕр чаçăн снайперĕсем икĕ эрне хушшинче нимĕçсен 238 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Снайпер Калашников юлташ 18 гитлеровеца вĕлернĕ, снайпер Уваров юлташ 16 çынна вĕлернĕ. Çамрăк снайперсем Звягинцев, Страшный, Уваров, Двуруков тата Нусинович юлташсем виçĕ кун хушшинче 20 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллери тата разведка тăвакан группăсем нимĕç пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 3 дзотне, 5 землянкине аркатнă тата тăшманăн персе тăракан темиçе точкине пусарнă.

* * *

Полесье облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕç гарнизонне тапăннă. Партизансем 70 гитлеровеца вĕлернĕ. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 3 пулемет, миномет, 30 винтовка, минăсем тата патронсем нумай. Çавăн пекех нимĕçсем вырăнти халăхран вăйпа туртса илнĕ 170 пуç мăйракаллă шултăра вылăха каялла тытса илнĕ. Вăл вылăха халăха тавăрса панă. Çав кунах партизансен группи чугунçул депоне сирпĕнтернĕ, ремонт мастерскойне тата 3 паровоза аркатса тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 25-мĕш мотодивизийĕнчи 35-мĕш полкран Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Бронислав Итальский, поляк çынни, çапла каласа панă: «Нимĕçсем Польшăра çав тери йĕркесĕр, юнлă террор режимĕ туса хучĕç. Нумай хресченсенчен вĕсем çĕрсене тата пурлăха тытса илнĕ. Çĕршер пин поляка вĕлерсе пĕтернĕ е концентраци лагерĕсене хупнă. Эпĕ Грудзино наместийĕнче пурăнаттăм. Пирĕн ялта поляк-хресченсене пурне те çĕрсĕр тăратса хăварчĕç. Вĕсен килçурчĕсене нимĕçсем тытса илчĕç. Поляксене батраксем туса нимĕç поселенецĕсем патне хăварчĕç. Темиçе ксендза гитлеровецсем Дахаури концентраци лагерьне илсе кайрĕç. Нимĕçсем поляксене авалтан пурăнакан вырăнсенчен хăваланине хам куçпа куртăм. Çĕрле эсэсовецсем хваттерсене çĕмĕрсе кĕретчĕç те çынсене урама хăваласа кăларатчĕç, унтан вĕсене концентраци лагерĕсене хăваласа каятчĕç. Палач Гитлер Польшăна юн айне турĕ. Поляк халăхĕ гитлеровецсенчен темĕн чухлĕ хурлăх тўсрĕ. Нимĕç арминче пулса нимĕçсемшĕн çапăçнине эпĕ чи пысăк намăс вырăнне шутлатăп».

Ĕç тухăçлăхне ўстерчĕç

Шупашкарти «Красный кустарь» артельри рабочисемпе работницăсем, Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланса, хăйсен ĕçлес хастарлăхне ўстерчĕç.

Çĕлĕксем çĕлекен цехри работницăсем А. Данилова, А. Филиппова, Мальчикова юлташсем кашни кунах ĕç нормине 330—340 процент тултарма тытăнчĕç. Çамрăк работница Вера Михайлова та май уйăхĕнче кунсеренех ĕç нормине 270 процент тултарса пырать. Артельре нормăна тултарайман çын пĕрре те çук. Вĕсем пурте: — Пирĕн хамăрăн тăван боецсем валли тăхăнмалли япаласем ытларах парса тăмалла, ăна пире Сталин юлташ хушать,—теççĕ.

Апрель уйăхĕнче артель производство планне 113,6 процента çити пурнăçланă пулсан, май уйăхĕнче 160 процент таран пурнăçлама обязательство илчĕ.

С. Абрамовский.
«Красный кустарь» артелĕн председателĕ.

Хĕрлĕ ялава алăран ямастпăр

Шăхальри вăтам шкул (Вăрмар р.) вăрçăн йывăр условийĕсене пăхмасăрах кăçалхи вĕренў çулĕнче, иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, чылай пысăк утăмсем турĕ. Кăçалхи çул вăл районри куçса çўрекен Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Шкулта пурĕ 16 класс. Вĕсенче 454 ача вĕренет. Вĕренў çулĕн виççĕмĕш чĕрĕкĕ пĕтĕм шкулти ачасен 93 процентĕ вĕренўре ĕлкĕрсе пынипе вĕçленчĕ. Çав вăхăтрах шкула çўресси те начар пулмарĕ, вăл 94 процент шутланнă. Хăшпĕр классем калама çук лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. М. Ф. Федорова юлташ вĕрентекен 2-мĕш „А“ класра вĕренўре ĕлкĕрсе пыраймании пĕр ача та çук. Çавăн пекех А. Н. Биктимирова вĕрентекен класра та вĕренўре пурте ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Вĕренўре малта пыракансен хисепĕ ўсвĕçемĕн ўссе пычĕ. Хальхи вăхăтра отличниксем 40, ударниксем 79 шутланаççĕ. 9-мĕш класри Таисия Краснова, Лев Волков 3-мĕш „А“ класри Анна Кузьмина, 8-мĕш „Б“ класри Анатолий Хорев, Илья Иванов тата ытти вĕренекенсем те вĕренўри отличниксем тата пур енĕпе те примерлă вĕренекенсем шутланаççĕ.

Пирĕн шкул фронта пулăшас тĕлĕшпе те аван ĕçлерĕ. Самолетсен „Комсомолец Чувашии“ эскадрильине тума 8 пин тенкĕ тата танксемпе самолетсем тума 3.355 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пухса панă. Вăл шутран 8-мĕш „Б“ класра вĕренекенсем 425 тенкĕ, 4-мĕш „В“ класра вĕренекенсем 190 тенкĕ пухнă. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсем валли 117 кĕнеке пухса панă. Çав вăхăтрах колхоза çуракине хатĕрленме те пулăшнă. Шкул ачисем пурĕ 120 центнер вырăнти удобренисене пухса панă. Хальхи вăхăтра ачасемпе вĕрентекенсем испытанисене хатĕрленеççĕ. Çак испытанисене иртерне хыççăн та районри куçса çўрекен Хĕрлĕ ялава алăран вĕçертес мар тесе тăрăшатпăр.

К. Орлова.

Çуртыррисене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа акса хăварар

(Республикăри радиоперекличкăран)

Кăçалхи çуракине пирĕн республикăри колхозсемпе МТС-сем халиччен çулсенчинчен чылай лайăхрах хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Çуракине ăнăçлăн ирттерме республикăри районсенче кирлĕ майсене пурне те тунă. Халĕ ĕнтĕ тырпул ăнăçлăн пуласси пĕтĕмпех çуракине хăвăрт тата пысăк пахалăхпа туса ирттерничен килет.

Республикăра çураки мĕнле пынине пăхса тухсан çакă курăнать: Вăрнар, Калинино, Елчĕк районĕсен руководителĕсем çурхи тырăсене вăхăтра акса хăварни пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илнĕ. Асăннă районсенче çурхи уйхир ĕçĕсем ытти районрисенчен хăвăртрах пулса пыраççĕ. ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ Коротков юлташ радиоперекличкăра районри 15 колхоз тĕштырăсене акса пĕтерни çинчен тата çиĕнçчех çĕрулми лартма, техникăллă культурăсем акма тытăнни çинчен пĕлтерчĕ. Майăн 7-мĕшĕпе 8-мĕшĕсенче районри ытти мĕнпур колхозсем те тĕштырăсене акса пĕтереççĕ. Колхозниксем ака ĕçĕсен пахалăхĕшĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Сеялкăсем ĕçлеме пултарнă таранах ĕçлеççĕ, алăпа малтанхи кунсенче кăна тата пысăк мар çĕр лаптăкĕ çинче акнă. Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре колхозсенчи пахалăх инспекторĕсем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Зеленовка тата ытти колхозсенче вĕсем тĕштырăсене агротехникăн чи лайăх срокĕсенче тата пысăк пахалăхпа акса хăварассине пурнăçа кĕртнĕ.

Çав вăхăтрах Кувакино, Пăрачкав, Вăрмар, Тăвай, Ишлей районĕсенчи колхозсем питех те вăрахăн акаççĕ. Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш премин илме тивĕçлĕ пулнă пирĕн республикăна çав районсем каялла туртаççĕ. Вĕсем агротехникăн лайăх срокĕсемпе усă курса юлма тăрăшмаççĕ. Çав районсенчи парти райкомĕсемпе райисполком председателĕсем, райçĕрĕç пайĕсен заведующийĕсемпе МТС директорĕсем уйхир ĕçĕсене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Хăйсен аллинчи пысăк майсемпе вĕсем çуракине ăнăçлăн иртерес ĕçре усă курмаççĕ. Çав районсенчи çĕрĕç пайĕсен заведующийĕсемпе агрономсем колхозсенчи ĕçе организацилесси çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ. Вăрмар, Кувакино районĕсенче, сăмахран, сухаçăсем нумай колхозсенче ушкăнпа ĕçлеççĕ, кашни сухаçăна уйрăм участоксем валеççе памаççĕ, ĕçшĕн ĕçе кура тўлемеççĕ.

Кăçалхи çуракине иртерес ĕçри пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл — сеялкăсемпе акассине хакламанни пулса тăрать. Чылай районсенче, сеялкăсем пур çĕртенех, халĕ те алăпа акаççĕ. Советски районра паянхи куна акса хăварнă 4 пин ытла гектартан сеялкăсемпе 233 гектар кăна, Ишлей районĕнче 5.480 гектартан сеялкăсемпе 2.000 гектар кăна акнă. Çĕрпў, Тăвай тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсенче те сеялкăсемпе питех те япăх усă кураççĕ. Сеялкăпа акассине хакламанни, паллах, тырпул тухăçлăхне чакарма пултарать. Малашне сеялкăсемпе туллин усă курмалла, алăпа акса агротехникăна пăсма памалла мар. Колхозсенчи пахалăх инспекторĕсен ответлăхне ўстермелле.

Массăллă ака эрне ытла пырать ĕнтĕ, анчах нумай МТС-сем хăйсен ĕçне сарса яман-ха. Çĕрпў МТС-ĕ трактор ĕçĕсен планне пĕтĕмпе те 20 процент, Етĕрне МТС-ĕ — 9 процент чухлĕ кăна пурнăçа кĕртнĕ. Кувакино МТС-ĕнчи трактор бригадисем питех те начар ĕçлеççĕ. Техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрас ĕçе начар йĕркеленине пула, горючи çуккипе тата ытти сăлтавсене пула кунта трактор бригадисем малтанхи кунсенчех простойсем тума пуçланă. МТС директорĕсемпе политотдел начальникĕсем хăйсен ĕçне кирлĕ пек тытăннă пулсан, çав çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулнă пулĕччĕ.

ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тўррĕнех кăтартса панă пулин те, çав МТС-сенчен пĕринче те куçса çўрекен мастерскойсем туман. Çавна пула пĕчĕк çитменлĕхсемшĕнех трактористсен, ĕçрен татăлса, кирлĕ материалсемпе запаслă пайсем илмешкĕн района кайма лекет. Çав МТС-сенче тракторсене каçхине ĕçлеттермелле туман. Тракторсем çине фонарьсем кăна лартмалла, фонарьсем кашни МТС-рах тата колхозсенче те тупăнаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ радиоперекличкăра çуракине оперативлăн ертсе пыма кирли çинчен уйрăмах асăрхаттарчĕ. Тĕштырă культурисене акса пĕтернĕ хыççăн çийĕнчех ытти культурăсене акмалла. Ака ĕçĕсен хăвăртлăхне кунран-кун ўстерсе пымалла.

Пирĕн çĕршыв хаяр вăхăта тўссе ирттерет. Отечественăй вăрçăн татăклă саманчĕ çитрĕ. Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă хăйĕн приказĕнче рабочисемпе колхозниксене, пирĕн мĕнпур совет интеллигенцине фронтшăн вăя икĕ хут ўстерсе ĕçлеме хушать. Тăван çĕршыв халĕ колхозлă ял умне чи ответлă требовани лартать — уйхирсене вăхăтра, пысăк пахалăхпа акса хăвармалла, пулас тырпулăн никĕсне çирĕп хывса хăвармалла. Çак требование хамăрăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе пурнăçа кĕртмелле.

Республикăри колхозсенче çураки ĕçĕсем майăн 5-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Çурхи тырăсем акнă (процентпа).
Калининскн	67,3
Вăрнар	67,0
Елчĕк	60,2
Шăхасан	51,8
Комсомольски	50,8
Чкаловски	49,8
Элĕк	49,7
Красноармейски	49,4
Шупашкар	47,2
Хĕрлĕ Чутай	45,1
Етĕрне	45,1
Канаш	43,7
Йĕпреç	43,4
Сĕнтĕр	43,2
Советски	42,8
Первомайски	42,5
Сĕнтĕрвăрри	40,5
Шăмăршă	38,0
Улатăр	36,7
Çĕрпў	36,3
Йншлей	35,7
Çĕмĕрле	34,6
Куславкка	32,3
Октябрьски	30,5
Тăвай	29,8
Пăрачкав	22,7
Вăрмар	21,2
Кувакински	14,5
Шупашкар хули	15,6
ЧАССР тăрăх	42,1
1943 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă	26,4

Илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлатпăр

Эпир Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн приказне малтан пĕтĕм коллективпа пĕрле пухăнса сўтсе яврăмăр. Халĕ çак историллĕ приказа цехсенче кашни уйрăмăн вĕренес ĕçе организацилерĕмĕр. Приказа вуласа тухсанах рабочисемпе работницăсем, Сталин юлташăн приказĕ фронт валли продовольстви ытларах туса пама чĕнни çине ответлесе, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç.

Смена мастерĕ А. Денисова юлташ иртнĕ уйăхсенче производство планне 140 процент тултарса пынă пулсан, халĕ 150 процент пурнăçлама обязательство илчĕ. Унăн сменинче ĕçлекенсем К. Сергеева, Зоя Денисова, Лукоянова юлташсем кашни кунхи ĕç нормине 277 процент тултарса ĕçлеççĕ. Сталин юлташăн приказне сўтсе-явнă хыççăн вĕсем кулленхи ĕç нормине 300 процент тултарма пулчĕç.

Фабрика коллективĕн ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. Вĕсен пурин те пĕр шухăш-кăмăл — фронтпа çĕршыв валли ытларах продовольстви туса парасси, аслă çулпуç ыйтнине пурнăçа кĕртесси.

Апрель уйăхĕнче эпир производство планне 137 процент тултарса, Верховный Главнокомандованин уйрăм фондне 2 вагон ытла макарон хыврăмăр.

Май уйăхĕнче эпир тата тухăçларах ĕçлеме пултăмăр. Производство программине ик-виçĕ хут ытларах пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăйпа кĕрешетпĕр.

Б. Столяров,
Шупашкарти макарон фабрикин директорĕ.

КАРЛ МАРКС

ÇУРАЛНĂРАНПА 125 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ МАЙ

Майăн 5-мĕшĕнче научнăй коммунизмăн никĕсне хываканĕ, ĕççыннисен аслă çулпуçĕ тата учителĕ, малта пыракан наукăн корифейĕ — Карл Маркс çуралнăранпа 125 çул тултарчĕ.

Карл Марксăн ячĕ пирĕн çĕршывра тата пĕтĕм тĕнчере аслăн палăрса тăрать. ССР Союзĕнчи халăхсен массисем Маркса юратаççĕ, вĕренеççĕ, мĕншĕн тесен вăл ĕççыннисене ирĕке кăлармалли çула, çĕр çул каярах тенĕ пек, пуринчен малтан кăтартса панă.

Маркс çуралнăранпа 125 çул тултарнине эпир совет халăхĕ хамăрăн тăван çĕршывăн чи усал тăшманне хирĕç — пирĕн çĕршыври ĕççыннисем çĕнтерсе илнине пурне те пĕтерсе тăкма, совет çыннисене ирĕклĕхсĕр тăратса хăварма хапсăнакан гитлерла империализма хирĕç тĕрĕслĕхлĕ вăрçă туса пынă тапхăрта паллă тăватпăр.

Марксистла теори обществăллă кĕрешӳре хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Марксистла-ленинла теори общество аталанăвĕн законĕсене ăнлантарса парса пире хĕçпăшаллантарать. Маркс вĕрентĕвĕ пирĕн çынсене ирсĕр фашизмăн реакцине хирĕç, гитлеровецсен варварствине хирĕç, фашистла çынçиенсене хирĕç кĕрешме хавхалантарать. Марксистла-ленинла теори пире вăрçă мĕнле пынине, вăрçăн тенденцийĕсемпе законĕсене ăнлантарса парса, гитлерла Германия вăрçăра тата политикăра пурĕ-пĕрех арканса каяссине ăнлантарса парса хĕçпăшаллантарать. Вăл пире историллĕ событисен мĕнпур тарăнăшĕпе анлăшне ăнланса илме вĕрентет, пире хамăр çĕнтерес шанчăка кӳрет.

* * *

Маркс тĕнче историйĕн чи паллă деятелĕсен ретĕнче тăрать. Вăл наукăра тунă открытисем виленмсĕр. Маркс хăй тата унăн аслă тусĕ Энгельс пурăннă чухнех Марксăн ячĕ миллионсен ялавĕ, чуралăхпа пусмăрлăха пĕтерсе тăкассине палăртакан символ, çынсем çĕр çинче малашне телейлĕ пурнăç тăвассин символĕ пулса тăнă.

Маркс вĕрентĕвĕ, — тесе палăртнă нумай хутчен Ленин, — тĕнчери наука аталанăвĕн аяккинче мар çуралнă, вăл Марксченхи тапхăрти чи малта пыракан идейăсене малалла аталантарса яраканни пулса тăнă. Маркс вĕрентĕвĕнче философиллĕ наукăн, политикăллă экономин, социализмла теорисен чи паха çитĕнĕвĕсем критика витĕр тухса шăранса пĕтĕçнĕ.

Маркс çĕнĕ те аслă, çав тери хăватлă мировоззрени, **диалектикăллă материализмăн мировоззренине** туса хунă. Çав мировоззрени философиллĕ культурăн мĕнпур çитĕнĕвĕсене — материализма тата диалектикăна хăй ăшĕнче пĕтĕçтерсе, хăй умĕнхи мировоззренисенчен нумай малалла кайнă, Маркс саманичченхи чи аслă çынсем тунисенчен нумай çӳле çĕкленнĕ.

Маркс историе материалистла ăнланас вĕрентĕве тăваканĕ пулнă. Марксчен историллĕ процеса хаклас тĕлĕшпе нумай тĕрлĕ сапаланчăк та пăтранчăк, çыхăнусăр та тĕрĕс мар шухăшсем пулнă. Маркс вĕрентĕвĕ историллĕ процесăн тымарĕсене тата материллĕ никĕсне уçса панă кăна мар, общество аталанăвĕн законĕсен характерне уçса панă кăна мар, çакăнпа пĕрлех вăл çынсен пурнăçĕн обществăллă условийĕсене, çавăн пекех тата çав условисем улшăнса пынин сăлтавĕсене те чăн-чăн историллĕ тĕрĕслĕхпе палăртма малтанхи хут майсем туса панă.

Энгельс Маркс тăпри çинче каланă хăйĕн сăмахĕнче, çав открытие ăнлантарса парса, çапла каланă:

«Дарвин органикăллă тĕнче аталанăвĕн законĕсене уçса панă пекех, Маркс этемлĕх историйĕн аталанăвĕн законĕсене уçса панă».

Маркс историе материалистла ăнланмалли майсем уçса пани историе тĕпчес ĕçе малтанхи хут наукăн çирĕп никĕсĕ çине вырнаçтарнă. Вăл пĕр-пĕтĕмлĕ, çыхăнуллă та тĕрĕс, наукăллă теори тунă. Çав наукăллă теори çынсен обществăллă пурнăçĕ мĕнле законсем тăрăх аталанса пынине кăтартса парать, обществăн производительнăй вăйĕсем ӳссе пынине пула обществăллă пурнăçăн пĕр тĕрлĕ йĕркинчен обществăллă пурнăçăн тепĕр тĕрлĕ йĕрки пулса кайнине, пĕр тĕрлĕ йĕрке тепĕр тĕрлĕ йĕркене улăштарса пынине ăнлантарса парать.

Историре объективлă закономерносен мĕнпур пĕлтерĕшне палăртса, Марксăн историллĕ материализмĕ çынсем обществăллă пурнăçра тата политикăра активлăн кĕрешнин вырăнĕпе пĕлтерĕшне пăрахăçламасть. Пачах та урăхла, историе çавăн пек ăнланнин никĕсĕ çине тайăнсан кăна ĕнтĕ историре массăсен кĕрешĕвĕн вырăнĕпе пĕлтерĕшне кăна мар, çавăн пекех тата историллĕ аслă деятельсен вырăнĕпе пĕлтерĕшне те тĕрĕс палăртма май пулса тăрать. Историе материалистла ăнланни çинче никĕсленсе тăрса, Маркс, обществăллă вăйсен кĕрешĕвне, çав кĕрешĕве сарса яма историллĕ условисем пулса çитнĕ пулсан, активлăн сарса яма чĕннĕ; обстановка кĕрешĕве тума кирлĕ пек пулса тăнă пулсан, вăл çынсене активлă кĕрешĕве тухма чĕннĕ. Маркс кунта массăсен историллĕ пуçарулăхне уйрăмах пысăка хурса хакланă. Марксăн çав паха енне Ленин уйрăмах юратса палăртнă. Аслă мыслитель халăх массисен пуçарулăхĕ умĕнче пуç тайнинчен Ленин тĕлĕнсе хĕпĕртенĕ. Капиталистла общество аталанăвĕн законĕсене Маркс хăйĕн «Капитал» ятлă аслă та хăватлă ĕçĕнче çутатса панă. Марксăн «Капиталĕ» наукăра чăннипех те чаплă ĕç туни пулса тăрать. «Капитал» Марксăн пĕтĕм пурнăçĕнче тунă аслă ĕссен пĕтĕçтерĕвĕ пулса тăрать.

Марксăн ячĕ — вăл диалектикаллă материализм философине тăваканĕ, историе материалистла ăнланма вĕрентекенĕ, наукăллă социализм теорийĕн никĕсне хываканĕ, марксизмăн экономикăллă теорине тăваканĕ, çав тери чаплă историллĕ тĕпчевсен авторĕ пулса тăнипе анлăн палăрса тăрать.

* * *

Маркспа Энгельс нимĕç реакцине хирĕç çулăмлăн кĕрешекенсем пулнă, вĕсем пруссачествăн хăйне евĕр енĕсене пĕр хĕрхенмесĕр тăрă шыв çине кăларнă. Прусси юнкерĕсемпе баронсен вăрă-хурахла хапсăнăвĕсене тăрă шыв çине кăларнă.

Маркспа Энгельс Германи историйĕн хăйне евĕр уйрăмлăхĕсене уçса параççĕ.

Европăри ытти çĕршывсем капиталистла аталанăвăн çулĕ çине чылай маларах тухнă пулсан, çав çĕршывсем хăйсен историйĕ аталаннă май ытларах пĕтĕçсе çитнĕ пулсан, Германия экономика тĕлĕшĕнчен кая юлса пынă, XIX-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррине çитиччĕнех вак çĕршыв, наци тĕлĕшĕнчен сапаланчăк государство пулнă.

Германире прогрессиллĕ вăйсем питех те халсăрланни вăл 30 çул хушши вăрçă вăрçнинчен килнĕ. Пĕр-пĕринпе çапăçакан государствăсен çарĕсем ландскнехтсенчен тăнă, вĕсемшĕн вăрçă, уйрăмах чи варвăрла формăсемпе палăрса тăракан вăрçă вĕсен пĕтĕм пурнăçĕнчи професси пулса тăнă. Иртĕхсе кайнă ландскнехтсем усă куракан вăрă-хурахла система, пусмăрламалли система Германире вăйланса кайнă. Çав йăла Германи военщини юнĕпе чунне кĕнĕ. Германи военщини мĕн авалтанах хăйĕн çав тери тискерлĕхĕсемпе усал чап илнĕ. Гитлерла çарăн çав тери тискер ĕçĕсем вăтам ĕмĕрсенчи ландскнехтсен ирсĕр енĕсене татах та тепĕр хут чĕртеççĕ, вĕсем хăйсен вир̆çийĕпе чылай мала иртсе каяççĕ.

Чи кирлĕ те тĕп ыйтăва — Германие наци тĕлĕшĕнчен пĕтĕçтерсе аталантарас ыйтăва демократиллĕ прогрессивнăй никĕс çинче мар татса панă. Çав ыйтăва ăна Пруссин реакциллĕ ушкăнĕсем татса панă. Çакă ĕнтĕ Прусси юнкерĕсемпе баронĕсен Германи государствинчи хăйне уйрăм вырăнне туса хунă.

Захватчикла вăрçăсенче Прусси военщини çĕнтерни тискер кайăкла шовинизм, тевтонла патриотизм татах та ытларах сарăлса каясси патне илсе çитернĕ. Пруссин иртĕхнĕ военщини вĕçĕ-хĕррисĕр каппайнă. Çав военщина ытти мĕнпур çĕршывсене хăйĕн захватчикла планĕсене пурнăçа кĕртмелли уйхир вырăнне кăна шутланă, ытти мĕнпур халăхсене вара хăйсем çĕнтерсе чуралантарма хапсăннă. Нимĕçсен расăллă теорийĕсем пек е «господасен моральне» савса мухтав юрри юрлакан, вăр-хурахланнине, çаратнине тата вĕлернине мухтав юрри юрлакан Ницше теорийĕ пек наркăмăшлă идеологи, этемме этем тискер-кайăкла курайманнине чĕртекен идеологи çавăн пек анлăн сарăлнине эпир Германисĕр пуçне Европăра урăх пĕр çĕршывра та курмастпăр.

Германи империализмĕ Прусси юнкерĕ пуçпулса тăракан çĕршывра çитĕнсе пынă. Çакă ĕнтĕ вăл Германи империализмĕн питех те агрессиллĕ тата çав тери реакциллĕ характерне çуралма пулăшнă. **«Юнкерла-буржуалла империализм»**, — çапла палăртнă Ленин Германи империализмĕн уйрăмлăхĕсене.

Германи империалисчĕсем хăйсем çухатнине чи кĕске срокссенче тума, хăйсене валли мĕнле те пулин пысăкрах татăк çавăрса илме хапсăннă. Ытти çĕршывсем çине вĕсем тискер-кайăк çăткăнлăхĕпе тăрăннă. Германи империализмĕ мĕн пуçламăшĕнченех **чи çăткăн империализм** пулнипе палăрса тăрать. Хăйĕн тулашри политикинче вăл Германин кивĕ традицийĕсене, ултавлăхпа çăткăнлăх традицийĕсене чи çӳллĕ пусăма çĕклет.

Реакциллĕ Пруссие, çав «ултавлă та ирсĕр, хăравçă та иккĕленчĕк суя-державăна, унăн полициллĕ влаçне» Маркс хăйĕн аслă чунĕн мĕнпур хăвачĕпе курайман. Прусси реакцине хирĕç Маркс хăйĕн мĕнпур революциллĕ хастарлăхĕн вăйĕпе тăрса кĕрешнĕ. «Пĕр сăмахпа каласан, тĕнче историйĕ халиччен çавăн пек ирсĕр япала нихăçан та туманха»—çакăн пек пĕтĕçтернĕ Маркс Прусси историйĕ çинчен хăйĕн шухăшĕсене.

«Çакăнпа пĕрлех, — тенĕ вăл малалла, — правительсен списокĕнче яланах уйрăмăн палăрса тăракан вичĕ тип, кунпа çĕр улшăнса тăнă пекех, улшăнса тăраççĕ, вĕсем: ханжа, унтер-офицер тата ухмах...»

Маркс панă çак характеристика паянхи кун нимĕç фашисчĕсене вĕлермеллех тӳрĕ пырса тивет. Фашизм хăйĕн ăшĕнче Германин мĕнпур чи ирсĕр енĕсене пĕтĕçтерсе тăнă пекех, нимĕç фашисчĕсен пуçлăхĕ, çынçиен Гитлер хăйĕн сăнарĕнче Германи правителĕсен çав мĕнпур характерлă типĕсене пĕтĕçтерсе тăрать: вăл тăмсай унтер-офицер, ханжа-демагог тата ăсран кайнă каппайчăк.

* * *

Маркспа Энгельс промышленность капитализмĕн тапхăрĕнче, аталаннă империализм пулман чухне ĕçленĕ тата кĕрешнĕ. XIX-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕнче тата XX-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче историллĕ çĕнĕ самана пуçланать. Ленинпа Сталин Маркс теорине, çĕнĕ условисене кура, çĕнĕ обстановкăна тата рабочи класпа ĕççыннисен массисен кĕрешĕвĕн çĕнĕ опытне кура, малалла чаплăн аталантарса пыраççĕ. Ленинпа Сталин çĕнĕ аслă открытисем турĕç, çав открытисемпе марксистла наукăна пуянлатрĕç. Маркс — Энгельс—Ленин—Сталин теорийĕн ялавĕпе эпир хамăрăн çĕршывра аслă çитĕнӳсем турăмăр.

Маркспа Ленин шухăшĕсем пирĕн çĕршывăн пурнăçне çирĕп кĕрсе вырнаçрĕç. Вĕсем совет халăхне кĕрешӳре çул кăтартса пыраççĕ. Пирĕн халăх хăйĕн государствине тунă чухне, Россиăн сăн-сăпатне тĕпренех улăштарассишĕн, Россиăна индустриллĕ тата колхозлă хăватлă держава туса хурассишĕн мирлĕн ĕçленĕ чухне Маркспа Ленин теорийĕ пирĕн халăхшăн шанчăклă компас пулса тăнă. Халĕ те, гитлерла захватчиксене хирĕç отечественнăй вăрçă туса пынă кунсенче, вăл пирĕншĕн хаклă компас пулса тăрать.

Нимĕç фашисчĕсем ултавлăн килсе тапăннине кура пирĕн тăван çĕршывăн тӳссе ирттерме лекнĕ йывăр кунсенче эпир Марксăн—Энгельсăн—Ленинăн—Сталинăн никам çĕнтереймен ялавĕ айĕнче пырса тăшмана пуçĕпех çĕнтеретпĕр!

Эпир çакна пĕлетпĕр, çакна çирĕп шанса тăратпăр: Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ялавĕ каллех пирĕн **мĕнпур** Совет çĕрĕ çинче чаплăн вăркăшса тăрĕ!

М. МИТИН.

СТАРИК—СТАХАНОВЕЦ

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхоз членĕ Степан Евграфов колхозри чи ватă колхозниксенчен пĕри шутланать. Анчах вăл, 70 çулта пулин те, ваталăха пĕрре те туймасть. Вăл вăрçă вăхăчĕ хушнă пек, хăйĕн вăйне шеллемесĕр стахановла ĕçлет. Çулсеренех 300 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе илет.

Унăн икĕ ывăлĕ — Герасимпа Прокопий — фронтра. Вĕсем ытти боецсемпе пĕрле нимĕç захватчикĕсене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ. Вĕсене С. Евграфов вăрçă пуçланнăранпа сахал мар ăшă тумтирсем, парнесем парса пулăшнă.

Халĕ вăл, ватă пулин те, çуртыррисене сухаласа акса хăварас ĕçре тăрăшса ĕçлет. Пĕр кун юлмасăр суха тума каять, кулленхи ĕç нормине ирттерсе тултарать.

Ватă стахановец С. Евграфов кăçал колхоз уйхирĕнче ĕçлесе кăна 400 ĕçкунĕ тума сăмах панă.

Б. Шорников.

КАШНИ БРИГАДАПА ЗВЕНОРА БОЛЬШЕВИКЛА ЙĔРКЕЛĔХ, ХУРÇĂ ПЕК ÇИРĔП ДИСЦИПЛИНА ПУЛТĂР!

Политотдел куçĕнчен сухалнă бригада

Ку бригада Энĕшри Максим Горький ячĕпе тăракан колхозăн уйхирĕсенче. «СТЗ» маркăллă тăватă тракторпа трактористсем кăçал Энĕш колхозникĕсене çураки туса памалла. МТС-па договор тунă чухне колхоз председателĕ тракторсем тикĕс ĕçлесси çине çирĕп шаннă, акмалли нумай пулсан та, трактористсем пулăшнипе çурхи тырăсене планпа пăхнă чухлĕ çеç мар, ытларах та акса хăварма ĕмĕтленнĕ. Тухăçлăн ĕçлеме колхоз трактор бригадине лайăх условисем туса панĕ, кирлĕ таран бензин турттарса килчĕ, колхозниксем уйăрса пачĕ, трактористсем валли столовăй уçрĕ.

Анчах трактор бригадин бригадирĕ Чернов колхозниксем шаннине хакламарĕ. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче тракторсен ĕçне йĕркелесе пырас вырăнне, вăл ĕçсе çӳреме тытăнчĕ.

Бригада çуракине апрелĕн 27-мĕшĕнче тухнă. Пĕлсе тыткаламаннине пула икĕ трактор иккĕмĕш кунах ванса кайса ĕçлеме чарăнчĕç. Унтанпа 4 талăк иртрĕ ĕнтĕ, анчах бригадир Чернов вăл тракторсем усăсăр ларнишĕн кăшт та хумханмарĕ, вĕсем çĕмĕрĕлни çинчен механиксене те пĕлтерме васкамарĕ.

Хĕрсе ĕçлемелли хаклă вăхăт иртсе пырать. Тракторсем ĕçлемесĕрлари колхозниксене тарăхтарать. Тарăхмалла та. Бригада 6 талăк хушшинче пурĕ те 71 гектар çеç сухаланă, 50 гектар çеç акнă. Ытлăн пек хаклă бензина вара бригада çак хушăра нормăран ирттерсе 150 килограмм пĕтерсе тăкнă.

Бригадăра ĕç дисциплини çук. Бригадирĕ те ĕçлемест, трактористчĕсем те япăх ĕçлеççĕ. Тракторист Васильев апрелĕн 27-мĕшĕпе майăн 4-мĕшĕ хушшинче пурĕ те 17 гектар çеç сухаланă, анчах горючине 75 литр нормăран ытларах çунтарса янă. Тракторсем çĕрле пачах ĕçлемеççĕ.

Бригадир Чернов кадрсене вĕрентсе пырас вырăнне вĕсене ĕçрен ĕçе куçарать. Çапла вăл МТС дирекцине пĕлтермесĕрех учетчик-заправщик пулса ĕçлекен Яковлевăна ĕçрен кăларнă, ун вырăнне хăйĕн шăлнĕне ФЗО шкулĕнчен тарса килнĕ Яковлев Петра ĕçлеме илнĕ.

Шăхасан МТС-ĕн Политотделĕн Энĕшри Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз уйхирĕнче ĕçлекен 9-мĕш бригадăра халех кирлĕ улшăнусем тумалла.

В. Веселов.

Майăн 5-мĕшĕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**).

Трактористсем ĕç нормине ик-виç хут ирттерсе тултараççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 5-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Трактористсем, Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, çуракинче ĕç нормине тăтăшах ирттерсе тултарма пулчĕç. Вĕсен сăмахĕ ĕçрен уйăрлмасть. Чылай трактористсем çурхи акара хăйсен нормисене иквиçшер хут ирттерсе тултараççĕ.

Тракторист-стахановец В. Егоров юлташ, иртнĕ çулсенче кăтартуллăн ĕçлесе, ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулнă. Кăçал вăл тата пысăкрах çĕнтерӳсем туса ĕçлет. «СХТЗ» маркăллă тракторпа куллен 3,75 гектар сухаламалла пулсан, В. Егоров юлташ 6,5 гектар сухалать. Çуракин малтанхи 15 кунĕ хушшинче унăн 45 гектар сухаламалла. Акă 6 кун çеç иртрĕ, В. Егоров юлташ хăйĕн тракторĕпе 50 гектар ытла сухаларĕ те. Тухăçлă ĕçленипе пĕрлех вăл горючие те перекетлесе пырать.

Комсомолка Д. Егорова Сталин юлташăн приказĕ çине кунĕн-çĕрĕн тимлĕн ĕçленипе ответлерĕ. «У—2» маркăллă тракторпа талăкне 12 гектар сухаласа акать. Вăл çуракин малтанхи 6 кунĕнче 35 гектар сухаласа акнă, кулленех ĕç нормине 250 процент тултарать.

С. Шадин.

Йĕркеллĕ ĕçлемен çĕрте

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 5-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Калинин ячĕпе тăракан колхозăн уйхирĕсем анлă. План тăрăх кăçал тĕштырăсене кăна 319 гектар акмалла. Уйхир ĕçĕсем кунта апрелĕн 22-мĕшĕнче пуçланнă. Унтанпа 12 кун иртнĕ ĕнтĕ. Тракторсемпе 126 гектар сухаланине пĕрле илсен те, колхоз çак 12 кун хушшинче 213 гектар сухаласа 113 гектар çеç акнă. Çураки чăтма çук юлса пырать.

Колхозăн 88 лаша, ĕç хатĕрĕсем те çителĕклĕ. Лашасемпе кăна куллен чылай пысăк ĕç туса пыма пулать.

Япăх ĕçлени ăçтан килет-ха? Тĕп çитменлĕх — туртăм вăйĕпе туллин усă курманнинче, тракторсем ĕçлесе парасси çине шанса ларса, халăха ĕçе мобилизацилеме ӳркеннинче. Çуракине лашасене пурне те кӳлмен, кӳлнисемпе те çуршар гектар çеç сухаласа пыраççĕ. Бригадирсем ĕç тухăçлăхĕшĕн кĕрешмеççĕ. Пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлесси асра та çук.

Акă, 6-мĕш бригада (бригадирĕ Моисеева юлташ) сухаçăсене ĕç участокĕсем çирĕплетсе паман. Майăн 3-мĕшĕнче сухара 6 лаша çеç пулнă, вĕсемпе мĕнпурĕ те 1,59 гектар çеç сухаланă. Суха тума ирхине 7—8 сехетре çеç тухаççĕ, хĕвел аначченех ĕçлеме пăрахаççĕ. Кăнтăрлахи кану вăхăтне 2—3 сехет таран тăсаççĕ.

Нумай колхозниксем çураки ĕçне пачах хутшăнман. Çуракинче ĕçлекенсем хăйсем тумалли ĕçĕн нормисене пĕлмеççĕ, мĕн чухлĕ сухаланине те шута илсе пырса кăтартса пырас йĕрке çук кунта. Бригадирсем ĕç вăхăтне ытларах ялта ирттереççĕ.

Колхозра ĕç дисциплини кирлĕ вырăнта мар. Уйрăм колхозниксем хушнă ĕçрен пăрăнса çӳреççĕ.

Колхозра ака ĕçĕсем япăх пулса пыни колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе япăх туса пынинчен те килет. Колхозра комсомол организацийĕ пур. Ялта 12 учитель. Анчах вĕсем ку тарана çитсе те çураки ĕçĕсемпе интересленмен-ха. Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне колхозниксене ăнлантарса паман.

Калас пулаь, Калинин ячĕпе тăракан çак колхоз Хĕрлĕ Чутай районĕн центрĕнчен çухрăм çурăра кăна ларать. Колхозăн урамĕпе райсовет исполкомĕн председателĕ те, райçĕрĕç пайĕн агрономĕсем те, ВКП(б) райкомĕнче ĕçлекен ответлă работникĕсем те çураки пуçланнăранпа пĕрре çеç мар иртсе çӳренĕ пуль, анчах халиччен те колхоз правленине çураки ĕçĕсене организацилеме пулăшман.

Колхозсен ĕçне ертсе пырас тĕлĕшпе халех кирлĕ улшăну тумалла.

Х. Лисин.

Колхозсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

КАЛИНИНО, майăн 6-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Район çурхи тырăсем акмалли плана 70 процента яхăн пурнăçларĕ. 10 колхоз çураки туса пĕтерчĕ. Çавалкассинчи «Çутталла» колхоз, çураки планне тултарнă хыççăнах, кӳршĕри колхозсене пулăшма тытăнчĕ. Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоза 8 лаша ĕçлеме ячĕ. Пулăшу килнине кура ку колхозра колхозниксемпе колхозницăсем те нумай хут тухăçлăрах ĕçлеме пуçларĕç.

Ярославль облаçĕнчи колхозниксен пуçарăвне районри чылай колхозсем чыслăн пурнăçларĕç. Оборона фончĕ валли тата нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă колхозниксемпе колхозницăсене пулăшма «Çутталла» колхоз 18 гектар, Киров ячĕпе тăракан колхоз 22 гектар, «Чăваш Коммуни» колхоз 24 гектар тырă акса хăварчĕç.

Ф. Романов,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Махорка лартма хатĕрленеççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 5-мĕшĕ. Кăçал районра 260 гектар махорка лартмалла. Чылай колхозсем кăçал махоркăна 5-шер, 7-шер гектар лартма хатĕрленеççĕ.

Халĕ парниксенче тата йăрансем çинче махорка калчине ӳстереççĕ. Коминтерн ячĕпе тăракан колхоз, акă, 15 рама çинче калча ӳстерет. Районĕпе илсен, халĕ парниксенче 66 рама çинче тата 5.200 тăваткал метр калăпĕш йăрансем çинче махорка калчи ӳсет.

Х. Л.

ПИРĔН АВИАЦИ ДНЕПРОПЕТРОВСК КРЕМЕНЧУГ, БРЯНСК ЧУГУНÇУЛ УЗЕЛĔСЕНЕ ТАПĂННĂ

Майăн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле инçене вĕçекен пирĕн авиацин пысăк соединенийĕсем Днепропетровск, Кременчуг, Брянск чугунçул узелĕсем çине бомбăсем ăнăçлăн пăрахнă. Вĕсенче боеприпассемпе хĕçпăшал тиенĕ составсем туллиех пулнă. Пырса тапăннине пула пушарсем нумай тухнă тата вăйлă взрывсем пулнă.

Ют çĕршывсенче

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англин саккăрмĕш армийĕн фронтĕнче англичансен патрулĕсем тăшман позицийĕсем хушшине нумай шала кĕрсе кайнă.

Англин пĕрремĕш армийĕ кĕрешекен районра Джебель-бу-Ауказ высотине йышăнса илнĕ. Çурçĕртерехре тăшман американецсен иккĕмĕш корпусне хирĕç ăнăçсăр контратакăсем тунă. Хаяр çапăçусем хыççăн союзниксен войскисем пĕр паха тӳпемĕн пĕр пайне йышăнса илнĕ. Çапăçусенче татах 300 çынна тыткăна илнĕ.

Авиаци тăшманăн сутă-илӳ карапĕсене, портсемпе аэродромсене массăллăн пырса тапăннă.

Икĕ карапа путарнă тата çичĕ карап çине бомбăсем тӳрремĕнех лекни паллă пулнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 11 самолетне персе ӳкернĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Матертан хĕвелтухăçнелле куçса пыракан Америка войскисем халĕ Тебурбаран 9 километртра анчах тăраççĕ. Çапла вара, тусем çинчи нимĕç позицийĕсен çурçĕрти хĕрри патне çитнипе, союзниксем тĕнĕл держависен войскисен усă юлнă сылтăм флангне хирĕç кĕрешме пултараççĕ.

Бизертăна хӳтĕлекен Италипе Германи чаçĕсене анçăр участокра хĕссе лартнă. Бизертăран 6 мильăра тăракан Сиди-Ахмедри пысăк аэродрома американецсем инçене перекен орудисенчен персе тăраççĕ.

Франци войскисем Пон-дю-Фас—Энфидавиль çулне татнă. Тепĕр районра вĕсем, куçса çӳреме йывăр вырăнта 7 километр таран малалла куçса, тинĕс хĕррине тухнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ ĕнер тинĕсре, Франци çыранĕсем çывăхĕнче, тăшманăн пысăк мар темиçе карапне сиенленĕ. Ытти соединенисем Дюнкерк çывăхĕнчи таварлă поездсене тата баржăсене атакăланă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, вăрçă пуçланнăран вара Англин çыранĕсене хураллакан самолечĕсем карапсен 5.000 караванне хураллаcа 80 миллион миля таран вĕçнĕ. Çав вăхăт хушшинче вĕсем тăшманăн 882 подводнăй лодкине атакăланă, самолетсем 30.000 хут вĕçсе тухнă, сывлăшра тăшман авиацине хирĕç 1.600 хут çапăçнă. Юлашки икĕ çул хушшинче çыран оборонин самолечĕсем тăшман карапĕсене пин хут ытла тапăннă, вĕсенче 287 карапа пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Нумаях пулмасть Дортмунд çине вĕçсе пырса тапăннă вăхăтра хула çине кашни минутăрах 1.800 килограмм туртакан тăватшар бомба пăрахнă. Вăл хулана тапăнни Англин бомбардировочнăй авиацийĕн чи пысăк операцийĕсенчен пĕри пулнă. Хула çине 3.600 килограмм туртакан фугаснăй бомбăсем тата вуншар пин вут хыптаракан бомбăсем пăрахнă.

Антверпен хулине Америка самолечĕсем юлашки хут тапăнă чухне унта пулнă Форд завочĕсене тата «Дженерал моторс» компанин завочĕсене пысăк сиен кӳнĕ. Вăл заводсем Германи армийĕ валли çар грузовикĕсем туса кăлараççĕ.

Тӳрлетни

«Чăваш Коммуни» хаçатăн ĕнерхи номерĕнче «1943 çулта Чăваш АССР-ĕн районĕсем тăрăх выльăх-чĕрлĕхрен продукци илмелли план çинчен» Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановленири таблицăн юлашки графине çапла тӳрлетсе вуламалла: «Кашни ангорски ăратлă кролик амипе çăвăрĕсенчен мамăк илмелле (грампа шутласа)».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 705 Типографи № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.